Кун ҫинчен Чӑваш халӑх поэчӗ Петӗр Хусанкай пӗрре мар асӑнатчӗ. Иксӗмӗр унпа манӑн «Чӗрӗ ҫыхӑнусем» («Живые нити») кӗнекен малтанхи кӑларӑмне пичете хатӗрленӗ чух туслашрӑмӑр. Чи хаклӑ япаласене упранӑ пек упратӑп эпӗ талантлӑ сӑвӑҫӑн хам пата янӑ ҫырӑвӗсене. Толстоя ҫав тери юратнӑ поэт вӑл чӑвашсемпе ҫыхӑну тытни ҫинчен калакан материалсемпе кашни вак-тӗвек таранах хытӑ интересленетчӗ, ҫакна кӗнекере тӗплӗрех ҫутатса памалла пултӑр тесе тӑрӑшатчӗ. Уншӑн эпӗ ӑна ялан тав туса аса илетӗп.

«Чӗрӗ ҫыхӑнусем» кӗнеке тухнӑ-тухманах ун ҫинчен Ухсай Яккӑвӗ пичетре хӑйӗн шухӑшне каларӗ. Кӑштахран та, иксӗмӗр СССР писателӗсен съездӗнче тӗл пулсан, вӑл хӑйне литература ӗҫӗнче Толстой пултарулӑхӗ нумай пулӑшни ҫинчен каланӑччӗ. Унтан Ухсай ҫакӑн ҫинченех «Волга» журналӑн 1976 ҫулхи 5-мӗш номерӗнче тухнӑ «Время, творчество, долг» («Вӑхӑт, пултарулӑх, тивӗҫ») статйинче ҫырчӗ.

Ҫав сӑмахсенех ытти чӑваш писателӗсем те калама пултараҫҫӗ. Тӑван литературӑна нумай енчен тӗпченӗ М. Я. Сироткин профессор «Чӑваш совет литератури историйӗн очеркӗсем» ятлӑ монографилле ӗҫӗнче Толстойран «ҫынсен сӑнарӗсене ӳкерсе кӑтартмалли искусствӑна, чӗлхе сӑнарлӑхне» Хумма Ҫеменӗ, Илпек Микулайӗ, Алагер Ваҫлейӗ тата ытти писательсем те вӗренсе пыни ҫинчен асӑннӑ. Толстойӑн «чун-чӗре диалектики» хӑвӑрт аталанса пыракан ҫамрӑк чӑваш литературишӗн шухӑша тарӑннӑн та витӗмлӗн уҫса парас ӑсталӑха вӗренмелли хӑйне евӗр шкул вырӑнне пулнӑ. Совет халӑхӗсен туслӑ ҫемйинче ҫултан-ҫул хӑватлӑн чечекленекен тӑван культурӑна аталантарас ӗҫре талантлӑ чӑваш ҫыравҫисем аслӑ писательтен халӗ те нумай вӗренеҫҫӗ, вӗренӗҫ те.

Вӑл вилнӗ хыҫҫӑнах ҫырнӑ «Л. Н. Толстой» статйинче В. И. Ленинӑн ҫапла каланӑ вырӑн пур: «Толстой-художника Российӑра та ҫав тери сахаллӑн пӗлеҫҫӗ-ха. Унӑн чаплӑ произведенийӗсене чӑнах та мӗнпур ҫынсен пуянлӑхӗ туса хурас пулсан, миллионшар тата вуншар миллион ҫынна тӗттӗмлӗхре, нишлӗхре, чӗр тамӑкри пек йывӑр ӗҫре, чухӑнлӑхра асаплантарса усракан общество строя хирӗҫ вӗсен кӗрешмелле те кӗрешмелле, ӑна тӗпрен улӑштарса, социализм ҫулӗ ҫине тӑмалла». (В. И. Ленин. Ҫырнисен тулли пуххи, XX том, 19 стр.)

Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци ҫеҫ чӑваш халӑхне пӗтӗм культура пуянлӑхӗпе ҫывӑххӑн паллашма анлӑ ҫул уҫса пачӗ. Ҫакна Л. Н. Толстой произведенийӗсене чӑвашла нумай куҫарни, вӗсем хуласемпе ялсенчи кашни библиотекӑра, уйрӑм ҫынсен ҫӗршерпиншер библиотекисенче пурри, шкулсенче вӗсене тарӑннӑн вӗренни яр-уҫҫӑн ҫирӗплетсе парать.

Совет влаҫӗ ҫулӗсенче Л. Н. Толстойӑн хӑватлӑ пултарулӑхӗ мӗнпур халӑхсен ывӑлӗ-хӗрӗсен чӗрисем патне ҫывӑх ҫул тупрӗ. Халӗ тӗрлӗ нацисен миллионшар ҫыннисем унӑн вилӗмсӗр произведенийӗсене хӑйсен чи хаклӑ, чи ҫывӑх пуянлӑхӗ вырӑнне пахалаҫҫӗ.

Леонид БОЛЬШАКОВ.

*Хветӗр УЯР*

# КӖНЕКЕ

## Калав

Хветут пиччӗшӗ Микулай хут пӗлменнисен шкулӗнче вӗренет. Паян вӑл кӗнеке илсе килнӗ те вулама хӑтланса ларать.

—«Хӗ... хӗл-ле... ку... мул-кач... ял ҫывӑ... ҫывӑхӗн-че пу... пу-рӑн-нӑ», —тет вӑл асаплӑн, сӑмахсене тытӑнчӑклӑн калаҫакан ҫын пек вакласа. Вара урай шӑлакан шӑллӗне ӑнлантарса парать:—Мулкач вӑл пирӗнле куян пулать, ҫавна та пӗлместӗн.

Кӗнекери ӳкерчӗке куриччен ӑна вӑл хӑй те пӗлмен-ха. Микулай чӳрече патне пӗшкӗнет те малалла вулама тытӑнать: —«Тӗ... ттӗм пул-сан... мул-ка-ач...»

Хветут итлемест ӑна. Ун вӑхӑт ҫук. Урай шӑлса тухать те, ҫӳп-ҫапне тӑкса кӗрет. Аппӗшӗ амӑш тavрӑнниччен урайне сӗрсе хурсан та пӑсмастчӗ. Выльӑх пӑхас хуйхӑ ҫук-ха ун паян—пиччӗшӗн черечӗ. Тусӗ патне каҫӗччӗ Хветут урам урлӑ — сивӗрен хӑрать. Тӳрех сӑмсинчен ярса илет ӑна хӗл мучи. Сӑхманӗ те ала пекех ав.

—«Мул-кач... хӑ-рах... хӗл-хине тӑ-рат-рӗ»,—илтӗнсе каять пиччӗшӗн сасси.

—«Хӑлхине» мар-и?—тӳрлетме пӑхать Хветут.

— Ак ҫакна-и?—пиччӗшӗ Хветута хӑлхинчен шӑтӑр! пӑрать.—Пӗлмеҫҫӗ пуль сансӑр. Кӗнекере ҫапла ҫырнӑ. «Хӗлхине» тенӗ,—кӗнекерине юриех пӑсса вулать Микулай.

Ӗҫне тирпейлесе пӗтерсен, Хветут сентре ҫине хӑпарса выртать. Ҫилленмест вӑл пиччӗшне. Пысӑккисем хӑйсем ҫавӑн пек вӗсем. Пурин те аллисем ҫӳлте. Ӳссен ак Хветут та ҫапӑҫма тытӑнать пуль-ха. Ҫитменне айвантарах вӑл. (Мӑннисем ҫапла калаҫҫӗ ӑна). Айвана кам ӳркенмест—ҫавӑ кӳрентерет.

Аппӗшӗ амӑшӗ пирки шухӑшлать Хветут. Ҫӗрле таврӑнма пулнӑччӗ вӗсем. Кӳчченеҫ парса ярать ӗнтӗ ун валли аппӑшӗ. Халь ҫывӑрса илет те ак Хветут—ҫӗрле куҫ хупмасӑр кӗтсе ларать.

Анчах ыйхи ҫук та ҫук ун. Кӑштах шухӑшласан, мӗншӗн ыйхӑ килменнине те тавҫӑрса илет ача. Пиччӗшӗ кӗнеке вуланине итлесе выртать-мӗн вӑл. Микулай пӳрнипе йӗрлесе пырса кӗнеке вуласа ларать, Хветут ӑна курса пырать. Курса ҫеҫ те мар-ха, вӑл хӑй те ҫавӑнта. Кӗнекере ҫырса кӑтартнӑ ҫӗрте.

Уй варринчи хӗллехи каҫ. Таҫта кайма тухнӑ тиевлӗ лавсем. Лаша тулхӑрни, ҫуна ӳречисем ҫӑтӑртатни илтӗнет. Ҫул хӗрринче куян ларать. Вӑл лавсем иртсе пӗтессе кӗтет. Куян пуҫӗ тӗлӗнче сивӗ пӑс тӑрать, ун витӗр пысӑк ҫутӑ ҫӑлтӑрсем курӑнаҫҫӗ. Хветут ӗнсине хыҫалти лаша сывлӑшӗ кӑтӑклать пек.

Ача тӳрленсе ларма хӑтланать те, маччана лексе, хӑй

ăçтине аса илет. Тĕлĕнет вăл. Мĕн чĕртсе тăратрĕ ун пиччĕшĕ вуланине?

Хветут сентре çинчен урайне анма тытăнать. Микулая вулама чарас мар тесе, хуллен анать. Çĕрте те вăл пиччĕшĕ çумне мар, алăк патĕнчи кравать çине ларать, пиччĕшĕ еннелле мар, шăпăр шатăкнелле пăхать.

Шăллĕ мĕн тума аннине Микулай ăнланмасть. Вулама чарăнать те вăл Хветутран ыйтать:

— Сана мĕн кирлĕ?

—Мана-и?—тет лешĕ, ним калама аптраса. —Темĕн..

— Вуланине итлесшĕн эс. Çапла-и? Кала тӳррипе.

— Çапла.

— Эппин, акă мĕн. Малтан эс маншăн карта хырса кĕрен. Вара курăнать унта.

— Эсĕ унччен вуламăн-и?

— Ан хăра, вуламастăп.

Хветут васкаса амăшĕн кив кăçатне, хăйĕн сăхманне, çиелтен аппĕн кĕрĕк лăстăкне тăхăнать те картишне вирхĕнсе тухать. Ĕç пĕтерсе кĕрсен вăл алăк патĕнче кĕпе вĕççĕнех курăнса каять. Тумтиррисем хăшĕ кăмака çине, хăшĕ урайне ыткăнаççĕ.

— Тумтиррӳне пуçтарса çак.

Хветут сăхманĕпе кĕрĕкне илсе алăк патĕнчи çекĕле çакать. Алсишне кăмака шăтăкне чикет. Çĕлĕкне тăхăнать те хăюллăнах пиччĕш çумне пырса ларать.

— Вула малалла.

— Сан çӳççĕр юлас килет-им?—тет Микулай, Хветут пуçĕнчи çĕлĕке хывса. — Юрамасть пӳртре çĕлĕкпе.

Хăй такăнса вуланине пĕлнипех васкамасть пулас Микулай. Юлашкинчен пурпĕрех кĕнекине тытма тивет. Каллех сăмахсене ваклама тытăнать вăл. Хветут пуçĕнче пĕтĕмĕшле картина пулса пырать.

... Обоз иртсе пĕтсен, куян çул урлă каçать те майĕпен анкартинелле лăнкăштатать. Обозри усал анчăк куяна курнă-мĕн, пĕрех вĕрсе ярать те ун хыççăн ыткăнать. Куян кĕртсем çийĕпе чупать, ăна чăтать кĕрт. Йытă юр ăшне путать те чарăнать. Унран тăрăхланă пек, куян та чарăнать. Кăштах ларса тутине сиктеркелет, шăршласа пăхать те кайăк (Хветутсен енче куяна кайăк та теççĕ) хуллен анкартинелле сулăнать. Çара çĕрте калча çинче икĕ куяна тĕл пулать вăл. Лешсем выля-выля çисе çӳреççĕ. Пирĕн куян та юлташĕсемпе вылякалать, шăн юра чавса, калча çиет. Ялта пĕр сасчĕв те çук-мĕн, хăй çутисене те сӳнтерсе пĕтернĕ. Таçта пĕр ача макăрни, сивĕпе пӳрт пĕрени шартлатса çурăлни çеç илтĕнет..

Хветут тĕлĕнсе хытса каять. Мĕнле пурте çав тери ĕненмелле, куçа курăнмалла! Чĕрипе туять ача—йăлтах çапла вăл. Нимле те урăхла мар, шăп кăна çапла.

— Хăш тĕлте вăл—пӳрт пĕрени çурăлни?—тесе, Хветут кĕнеке çине тинкерсе пăхать.

Микулай та тĕлĕнет.

— Мĕнле пӳрт пĕрени? Ак тата саппала.

— Ара, хăв вуларăн-çке?

— Кĕнекерех пуль, эппин. Эп ăçтан пĕлем.

— Куянне тытса курам-и, пичче?

— Хăш куянне тата? Ун хӳри кĕске, тыттармасть вăл.

— Кĕнекине кăтартмастăн та..

— Ăна тытма малтан аллуна çумалла-ха.

Хветут йăпăр-япăр аллине çуса пырать.

— Халь юрать-и?

— Йӳтетмĕш эс, ача мар. Ме!—тесе, Хветута хупнă кĕнекин пĕр кĕтессине тыттарса кăтартать Микулай.

Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн ни ăшĕ канмасть, ни кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл. Лăпланма мар, тата ытларах хускалса каять кăна.

— Пичче тетĕп, тепĕр хут вуласа пар-ха ĕнтĕ?

— Халь анчах вуласа пĕтертĕм-çке. Унта урăх халапсем те пур.

— Халап мар вăл, чăн пулни. Эсĕ çакнах тепре вула. Паçăр тăнламарăм эпĕ.

— Хăлхасăр пупшăн икĕ хут чан çапмаççĕ.

— Вуласа кăтарт ĕнтĕ?

— Кай, ан сыпăç. Сурăхсене тухса утă антарса пар ав.

— Вĕсене эп паçăрах апат патăм. Çинчĕкне те пуçтарса хутăм. Картине те хыртăм. Ыран та хырăп.

— Хăвăн черетӳнче-и? Тăта кам хыртăр? Ытла чеçке эс. Аппа кучченеçне, хăвăн тӳпӳне, çитерме пулсан, вулăп.

«Тытман тилĕ тирне сутас-и?»—шухăшлать Хветут аппĕшĕ сăмахĕпе. Анчах пĕлес-итлес килни çĕнтерет-çĕнтеретех ун.

— Юрать, вула,—тет вăл тăтăклăн.

Пиччĕшĕ çавна çеç кĕтнĕ-мĕн. Вăл Хветута çупăрлать.

— Ан хăра, юри каларăм. Хам пая та сана парăп. Санăн ӳсмелле-ха.

Вара каллех ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртесе те тĕлĕнсе итлесе ларать Хветут. Сасартăк асамлă тĕнче уçăлчĕ пек ун куçĕ умĕнче. Кĕнекери ытарма çук тĕнче.

Микулай: «Мулкач лупашкана анса шăтăк турĕ, унта кутăн май кĕрсе ларса, хăлхисене çурăмĕ çине вырттарчĕ те куçне хупмасăрах çывăрса кайрĕ», тенĕ тĕлте Хветут пиччĕшне пырса ыталаса илет.

Хăй çĕрĕпе çывăраймасăр ирттерет.

Ухсерехпе çак кĕнекене тупса илме тĕв тăвать вăл. В. И. Ленин вилнĕ хĕл шкула çӳреме тытăнать ача. Вулама вĕренет. Тупать çав кĕнекене. Çемçе сăрă хуплашкаллă çеç-мĕн вăл. Хучĕ те чӳпĕкленсе çеç тăрать. Ӳкерчĕкĕсене лăп-лап каскаласа тунă. 1921 çулта Хусанта чăвашла куçарса кăларнă ăна. Çиеле çапла çырса хунă:

### Л. Н. ТОЛСТОЙ

**Ачасем валли çырнă калавсем.**

Хветут ăна хăйĕн чи хитре тăркăчĕпе улăштарса илет. Чи паха кĕнеке тесе упрать.